**Ҫĕнтерӳ ҫулĕпе: «Хыҫра – Мускав!»,**

**«Калуга – Тула – Мускав»**

***(Ҫул ҫӳрев урок сценарийĕ)***

***С.В. ПЕТРУШКИНА***, *Шупашкарти В.А. Архипов милици генерал-майорĕ ячĕллĕ кадет шкулĕнче чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекен*

***Умĕн калани.***

Чăваш чĕлхипе irттерекен класс тулашĕнчи ĕҫсем ачасен пултарулăхне ӳстерме, харпăр хăй тĕллĕн шухăшлама, ĕҫлеме тата уроксем хыҫҫăнхи канăва усăллă йĕркелеме пулăшаҫҫĕ.

Класри тата класс тулашĕнчи ĕҫсене ирттернĕ чухне ачасене пĕлӳ ҫеҫ мар, воспитани парассине те ялан асра тытатпăр. Вĕсем программа материалĕпе ҫыхăнччăр, вĕренекенсен шухăш-ĕмĕчĕсене тивĕҫтерччĕр, ҫав ĕҫсене шкулти кашни вĕренекен активлă хутшăнтăр тесе тăрăшатпăр. Уроксем, мероприятисем вĕренекенсемшĕн те, ашшĕ-амăшĕшĕн те усăллă пултăр тетпĕр.

Ачасем чăн-чăн патриотсем пулса ӳсчĕр тесе вĕсене тăван халăх, Раҫҫей культурипе тата ăс-хакăлĕпе туллин паллаштарса ăша хывса хăварма хăнăхтаратпăр.

Пирĕн шкулта экскурси мелĕпе кăмăл-сипет тата патриотизм воспитанине парасси – чи пĕлтерĕшлĕ тĕллевсенчен пĕри. Кадетсемшĕн экскурси – вĕренӳпе воспитание чĕрĕ пурнăҫпа ҫыхăнтармалли питĕ кирлĕ те усăллă мел. Экскурси материалĕсемпе вĕренӳре усă курни тишкерекен пулăмсен пĕтĕмĕшле саккунĕсене курăмлăн уҫса пама пулăшать, вĕренекенсене тем те пĕлме хавхалантарать, пултарулăха хăй тĕллĕн аталантарма илĕртет. Республикăри тата ҫĕр-шыври ытти хуласене экскурсие кайса килни предметсен хушшинчи ҫыхăнăва тытса пыма пулăшакан витĕмлĕ мел пулса тăрать. Ачасем тăван тăрăха юратма, ĕҫ ҫыннисене тата ветерансене хисеплеме вĕренеҫҫĕ, тăван вырăнсем ҫинчен, юнашар пурăнакан ҫынсем пирки ытларах пĕлсе ҫитĕнеҫҫĕ. Вĕсем темĕнпе те кăсăкланма

тытăнаççĕ, тĕрлĕ фактсене интересленсе тĕпчеме пуçлаççĕ, тăван халăхăн, юратнă хулан историне çеç мар, кӳршĕллĕ вырнаçнă хуласен кун-çулне те тарăннăн пĕлсе çитеççĕ.

Çак сценарире илсе кăтартнă çул çӳреве эпир класĕпе кайса килтĕмĕр. Вăл ачасен чунĕнче тарăн йĕр хăварчĕ. Кайран вара çĕнтерӳ маршручĕ тăрăх эпир çул çӳрев урок йĕркелерĕмĕр. Çакнашкал уроксене хатĕрлеме ытти вĕрентекенсене те сĕнесшĕн, мĕншĕн тесен вĕсем кăсăклăн та чĕррĕн иртеççĕ, ачасене тĕллевлĕн ĕçлеме хăнăхтараççĕ, шкул дисциплинисене пĕр тĕвве çыхаççĕ.

***Асăрхаттарни.***

Пирĕн вĕренӳ учрежденийĕ кадет шкулĕ пулнă май эпир урокра çар дисциплинин пайрăшĕсемпе, çар сăмахĕсемпе усă куратпăр. Çавăнпа сценарие çар хушăвĕсене, çар тытăмлăхне кĕртнĕ. Кадет мар шкулта вĕрентекенсемшĕн, паллах, «Смирно!», «Вольно!» йышши хушусем, урок вăхăтĕнчи кĕске докладсем кирлех мар. Çапах та хамăр ирттернĕ çул çӳрев урокĕн «кадетлăхне» кăтартас тесе хăш-пĕр хăй евĕрлĕхсене çавăн пекех хăварас терĕм.

## Урок юхăмĕ

Ушкăн ертӳçи. Класс, смирно! Хисеплĕ Светлана Вячеславовна, класс мероприятие хатĕр! Ушкăнра 13 ача, урокра пурте пур, никам та чирлемест. Ушкăн ертӳçи – Михаил Васильев.

Вĕрентекен. Пирĕн девиз…

Ачасем.

Чун – Турăшăн,

Пурнăç – Тăван çĕр-шывшăн,

Тивĕç – çынсемшĕн,

Чыс – хамăршăн!

Вĕрентекен. Сывлăх сунатăп, ачасем! Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вĕçленнĕренпе нумай çул иртрĕ. Тăван халăхăн çав йывăр та хăрушă

тапхӑрти паттӑрлӑхӗ пире ытларах та ытларах тӗлӗнтерет. Ҫынсем кар тӑрса, пӗр хавалла та пӗр шухӑшлӑ пулса хаяр та вӑйлӑ тӑшмана ҫӗнтернӗ.

Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗ В.В. Путин сӗннипе РФ Культура министерстви Аслӑ Ҫӗнтерӳ 70 ҫул тултарнӑ ятпа «Ҫӗнтерӳ маршручӗсем» проект йӗркелерӗ. Эпир те, кадет шкулӗнче вӗренекенсем, ҫак проекта хутшӑнтӑмӑр. Ҫуллахи каникулта «Хыҫра – Мускав!» ҫарпа патриотизм маршручӗпе ҫул ҫӳреве кайса килтӗмӗр.

Паян эпир ҫул ҫӳреври туйӑмсене, хамӑр пулнӑ вырӑнсене тепӗр хут аса илӗпӗр, тискер вӑрҫӑра тӑшман умӗнче пуҫ тайман совет салтакӗ ҫинчен калаҫӑпӑр. Хаяр тӑшманпа темӗнле ют ҫынсем ҫапӑҫман, вӑрҫӑ хирне юмахри паттӑрсем килмен – пирӗн асаттесем-асаннесем, кукаҫи-кукамайсем тухнӑ вилӗмлӗ тытӑҫӑва, вӗсем туптанӑ Аслӑ Ҫӗнтерӗве.

Чӑваш Енрен юнлӑ вӑрҫа 208 пине яхӑн ҫын кайнӑ, вӗсенчен 106 пин салтак каялла таврӑнайман. Пирӗн 71 ентеш (вӗсенчен 19-шӗ вилнӗ хыҫҫӑн) тата республика тулашӗнчи 22 чӑваш Совет Союзӗн Геройӗн ятне тивӗҫнӗ, 16 салтак Мухтав орденӗн тулли кавалерӗ. Вӑрҫӑ ҫулӗсенче Чӑваш Енрен 51 генерал, 5 адмирал тухнӑ.

Халӗ вара пурте экран ҫине пӑхатпӑр. Пирӗн умра ҫул ҫӳрев картти.

Тухса кайрӑмӑр класпа,
«Хыҫра – Мускав!» маршрутпа.
Ҫӗр-шывӑн тӗп хулине
Выртрӗ пирӗн ҫул ҫӳрев.

Вӗренекенсем курни-илтни, пӗлни ҫинчен каласа пама тытӑнаҫҫӗ. Ҫул ҫӳревре тунӑ сӑн ӳкерчӗксене урок тӑршшӗпех кӑтартаҫҫӗ. Ачасен сӑмахне тарӑнлатса кӑтартма, урок тапхӑрӗсене вӑйлатма Интернетран илнӗ информаципе, фотосемпе те усӑ курмалла.

1 - м ӗ ш   к а л а к а н. Мускавра эпӗ иртни тата хальхи ҫинчен те ҫӗннине нумай пӗлтӗм. «Мосфильм» киностудире ӗлӗкхи машинӑсемпе, кӳмесемпе, ытти хатӗрсемпе паллашрӑмӑр. Вӗсемпе халӗ те усӑ кураҫҫӗ! Строительсем кино ӳкерме пысӑк декорацисене хӑпартнине те куртӑмӑр. «Мосфильм» умӗнче, тӳремре, вӑрҫӑра пуҫ хунӑ киностуди ӗҫченӗсене

чысласа лартнă обелиск пур. Юнашарах «Оптимизмла трагеди» картина валли монумент та хăпартнă. Хăюлăхпа паттăрлăха сăнарлакан символ вăл.

2 - м ĕ ш  к а л а к а н. Мускав Кремльне курса çаврăнни те асра юлчĕ. Вăтам ĕмĕрсенчи çар-хӳтĕлев архитектурине, авалхи вырăс зодчествин чапа тухнă палăкĕсене, Успени, Благовещени, Архангел соборĕсене, Чан патшана, Тупă патшана унччен телевизорпа кăна курнă тăк, халĕ хамăр куçпа куртăмăр. Кремельти Иван тӳременче те – Раççей Федерацийĕн ĕçлĕхлĕ тата административлă центрĕнче чарăнса тăтăмăр.

3 - м ĕ ш  к а л а к а н. Мускавра эпир «42-мĕш бункера» – Таганкăри запасри команда пунктне кайрăмăр. Тултан пăхма çак пункт ахаль çурт пек анчах, чăннипе вара вăл – тимĕр бетон конструкци: 18 хутлăскер çĕр айнелле 60 метр тарăнăш анать.

4 - м ĕ ш  к а л а к а н. Бункерта çынсене вăрттăн коридорсем, складсем, аслă пӳлĕмсем витĕр илсе тухаççĕ. Экскурсие хутшăннисем кунта упранакан тĕрлĕ хĕç-пăшалпа, техникăпа паллашаççĕ.

5 - м ĕ ш  к а л а к а н. Бункерта çĕр-шывăн вăл вăхăтри ертӳçи Иосиф Сталин валли тунă кабинет та пур.

В ĕ р е н т е к е н. Бункера анма пире ятарлă пропуск та пачĕç. (*Пропускне кăтартать.*) Ядерлă взрыва та чăтса irттерекен команда пункчĕ хăй тĕллĕн кăна (автономлă) чылай хушă ĕçлеме пултарнă. Салтаксен çар дежурствинче пĕтĕмĕшле 3 уйăх тăма май пулнă. Паян кунччен те Таганкăри «42-мĕш бункер» юрăхлă, ĕçлевлĕ.

Жуков кун-çулне пĕлме,  
Музейсемпе паллашма,  
Аслă вăрçа тĕпчеме  
Мускавран Калугăна  
Кайрăмăр эпир вара.

6 - м ĕ ш  к а л а к а н. Калугăра эпир «Çĕнтерӳ маршалĕ» чыслă ята тивĕçнĕ Г.К. Жуковăн музейĕнче пултăмăр.

7 - м ĕ ш  к а л а к а н. Георгий Константинович 1896 çулта декабрĕн 1-мĕшĕнче Калуга облаçĕнчи Стрелковка ялĕнче çуралнă.

8 - м ĕ ш к а л а к а н. 1915 çулта вăл Пĕрремĕш тĕнче вăрçине хутшăннă.

9 - м ĕ ш к а л а к а н. Георгий хĕресне Жуков икĕ хутчен тивĕçнĕ. Çак хĕрес вăл вăхăтра салтаксемпе унтер-офицерсене паракан чи пысăк награда шутланнă.

В ĕ р е н т е к е н. Жуков хушамата эпир пурте мăнаçлăн калатпăр, мĕншĕн тесен вăл паттăр çын, Совет Союзĕн чи пултаруллă çар пуçĕсенчен пĕри пулнă. Тăван çĕр-шыва хӳтĕлес ĕçре, аслă Çĕнтерӳре унăн тӳпи питĕ пысăк.

2 - м ĕ ш к а л а к а н. Унăн ашшĕпе амăшĕ хресченсем пулнă. 1941 çулта Г.К. Жуков Хĕç-пăшаллă вăйсен Тĕп штабĕн начальникĕ пулса ĕçленĕ. Кĕске вăхăтрах çĕр-шывăн çар тĕрекне çирĕплетме нумай ĕç туса ĕлкĕрнĕ.

3 - м ĕ ш к а л а к а н. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче Георгий Константинович чи хĕрӳ çапăçусенче, чи йывăр вырăнсенче пулнă. «Çĕнтерӳ маршалне» пирĕн халăх халĕ те питĕ хисеплет, унпа тивĕçлипе мухтанать.

10 - м ĕ ш к а л а к а н. Г.К. Жуков – Совет Союзĕн Маршалĕ, тăватă хутчен Совет Союзĕн Геройĕ, «Çĕнтерӳ» орденăн икĕ хут кавалерĕ. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче вăл Тĕп штаб начальникĕ, фронт командующийĕ, Аслă Главнокомандующин заместителĕ пулнă.

В ĕ р е н т е к е н. Çул çӳревĕн тепĕр пункчĕ – Калуга облаçĕнчи Ильинское сали патĕнчи мемориал комплексĕ. Экскурсовод пĕр куççулленсе, пĕр мăнаçланса каласа пачĕ совет салтакĕсен паттăрлăхĕ çинчен. Хамăр та ăна пĕр сас кăлармасăр, сывламасăр тенĕ пек итлерĕмĕр, кашни сăмаха ас туса юлма тăрăшрăмăр. «Ильинские рубежи» çарпа истори музейĕ чуна тыткăнларĕ. Тавралăха курса çаврăнни, ДОТсене кĕрсе тухни халĕ те куç тулли тăрать. Хăвна вăрçă вăхăтне лекнĕнех туятăн кунта. Çапăçусем самантлăха çеç лăпланнă тапхăр пек. Кăшт тăрсанах таçта танк моторĕсен кĕрлевĕ илтĕнсе каяссăнах туйăнать. Вара каллех тупăсем пеме тытăнаççĕ тейĕн.

Çитрĕмĕр ак Тулăна

Хĕç-пăшалпа паллашма.

Пĕтереймĕн каласа

Мĕн-мĕн пуррине кунта.

Пĕремĕк тути вара

Паянччен манăн асра.

11 - м ĕ ш  к а л а к а н. Тулăри Кремль тĕлĕнтерчĕ. Ăна нихăçан нимĕнле тăшман та илеймен, фашистсем те кĕреймен унта.

12 - м ĕ ш  к а л а к а н. «Тула тăрăхĕн çар историйĕн музейĕ» питĕ пуян. Шкулти уроксенче тишкернĕ пулăмсемпе çĕнĕрен тĕл пулни чуна хавхалантарать! Сăмахран, «Кулик хирĕнчи çапăçу» экспозици патĕнче хумханмасăр тăма май çук.

10 - м ĕ ш  к а л а к а н. «Тулăри хĕç-пăшал музейĕ» пирĕн çĕр-шыври чи ватă музейсенчен пĕри. Кунта çак хулари çар завочĕсем кăларнă экспонатсем упранаççĕ. Питĕ, питĕ интереслĕ! Чи асра юлнă самант – «Тула хулине хӳтĕлени» квест-вăйă. Хамăра чăн-чăн салтаксем пекех туйрăмăр, хĕç-пăшал та салатса пуçтартăмăр. 1941 çулта Тула хулинче панă апата та тутанса куртăмăр: 150 грамм çăкăр тата кишĕр чейĕ пулчĕ вăл.

В ĕ р е н т е к е н. Тула хули мĕн авалтанах Ока тăрăх ларса тухнă чаплă хуласен тытăмне кĕнĕ. Çак хӳтĕлев чиккине ытарлăн «Пояс святой Богородицы» тесе те калаççĕ. 1941 çулта Мускав патĕнчи çапăçура та Тула хулин çар пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк пулнă. Халĕ вара класра пĕчĕк квест-вăйă ирттерĕпĕр. Кашни ушкăна хăйне евĕрлĕ ĕç пулать.

**Квест-вăйă йĕрки.**

***1-мĕш ушкăн*** Калашников автоматне салатса пуçтарса ăмăртать.

***2-мĕш ушкăн*** çул çӳревĕн сăн ӳкерчĕкĕсене тĕрĕс вырнаçтарса тухать: хăш вырăнта пулнине йĕркипе кăтартать. Çакăн хыççăн ачасем фотосемпе усă курса «Боевой листок» кăлараççĕ, çул çӳрев маршрутне сăнарлаççĕ.

***3-мĕш ушкăн*** çапăçура малтанхи пулăшăва мĕнле памаллине ăнлантарать. Медицина хатĕрĕсемпе мĕнле усă курмаллине каласа парать, «сурансене» çыхса кăтартать.

В ĕ р е н т е к е н. Мускав патĕнчи хаяр çапăçусенче паттăррăн пуç хунă салтаксене чыс та мухтав. «Хыçра – Мускав!» çул çӳрев урока эпир пĕчĕк викторинăпа вĕçлĕпĕр. (Ăмăртăва паçăр уйăрнă 3 ушкăн хутшăнать.)

1942 çулхи кăрлач уйăхĕнче «Правда» хаçатăн корреспонденчĕ Петр Лидов тата «Комсомольская правда» хаçатăн корреспонденчĕ Сергей Любимов диверсант хĕр упраçăн паттăрла вилĕмĕ çинчен очерксем пичетлесе кăларнă.

Çак очерксемпе хавхаланса хăш чăваш поэчĕ поэма çырнă? (*П.П. Хусанкай.*)

Поэма мĕн ятлă? (*«Таня».*)

Паттăр диверсанткăн чăн ячĕ мĕнле? (*Зоя Космодемьянская.*)

Мускав облаçĕнчи хăш ялта тыткăна лекнĕ вăл? (*Петрищево.*)

Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçинче 80 ытла хĕрарăм Совет Союзĕн Геройĕ ятне тивĕçнĕ. Зоя Космодемьянская вĕсенчен миçемĕшĕ пулнă? (*Зоя Космодемьянская аслă вăрçăра çак звание хĕрарăмсенчен чăн малтан тивĕçнĕ. Герой ятне ăна 1942 çулхи нарăсăн 16-мĕшĕнче панă.*)

Тăван çĕр-шыв ирĕклĕхĕшĕн паттăр хĕр миçе çулта пуç хунă? (*18 çулта.*)

Викторина хыççăн çул çӳрев пĕтĕмлетĕвĕсене туни, ушкăнсен ăмăртăвĕнче уйрăмах хастар пулнă ачасене палăртни. Урока вĕçлесе ура çине тăрса пурте пĕрле кадетсен гимне юрлани.

**Хыççăн калани**.

Компьютер технологийĕсем пулăшнипе паян хуть те мĕнле виртуаллă çул çӳрев ирттерме май пур. Чи кăсăкли – çак меслетпе сĕм авалхи вăхăтсене те «çитсе курма» май пурри. Атилла тапхăрĕпе, Алмуш элтепер Атăлçи Пăлхарне никĕсленипе паллашма нимĕн те чăрмантармасть. Регион компоненчĕсемпе ятарлă урокра туллин усă курас тесен интеграл мелĕпе ĕçлемелле, ытти дисциплинăсен темисене анлăн кĕртмелле.


Brasil
NIKE
30/07/2015 18:30




**Калуга облаçĕнчи «Ильинские рубежи» ятлă çарпа истори музейĕ**




**Тула хулинчи кремль**




**Квест - вăйă**